ЧР Президенчĕн Çырăвĕ

# Умра – пĕлтерĕшлĕ пысăк задачăсем

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Тутар, Мордва Республикисенчи хуçалăхсенче пĕрре кăна мар пулма тӳр килнĕ. Вĕсем епле ĕçлени пирĕншĕн те тĕслĕх пулса тăма тивĕç. Ку республикăсенче производство тĕсĕсене кура тĕрлĕрен пĕрлешӳсем, холдингсем йĕркеленĕ. Çавна май вĕсен инвестицисемпе усă курма та, хăватлă çĕнĕ йышши техника туянма та майсем ытларах. Пирĕн халĕ тĕп тĕллев сахал йышпах ытларах ĕç пурнăçлама, продукци туса илме тытăнасси пулса тăмалла. Палăртрăм ĕнтĕ, çакна валли вак хуçалăхсен хевте çитеймĕ.

Президент уйрăммăн палăртакан тепĕр пĕлтерĕшлĕ задача вăл – экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса илесси. Ку чăнах çапла пулмалла. Продукци калăпăшĕ çине кăна пăхни çителĕксĕр. Пахалăх пирки те манма юрамасть.

Пирĕн район «Чăваш Республикинчи ял хуçалăх районĕсен аталанăвĕн регион моделĕ» Европа комиссийĕн проектне хутшăнать. Çакă шăпах ĕнтĕ вăл экологи тĕлĕшĕнчен таса ял хуçалăх продукцийĕ туса илме тытăнассипе çыхăннă. Ку проекта Чăваш Республикипе Бавари специалисчĕсем пĕрле туса хатĕрленĕ. Паллă ĕнтĕ, çакă вăл пĕр кунхи ĕç мар, малашлăх валли палăртнă тĕллев. Апла пулин те ку тĕлĕшпе малтанхи утăмсене те пулин тума тытăнас пулать, вĕсем пур та ĕнтĕ. Çĕре сухаламасăрах акма-лартма хатĕрлесси пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Минераллă удобренисемпе, тĕрлĕрен наркăмăшлă препаратсемпе пачах усă курмалла мар. Ял хуçалăх культурисене çут çанталăк мĕн панипе кăна çитĕнтермелле. Калăпăр, органикăллă удобренисем хире тиесе тухас пулсан та выльăхсем патĕнче хими препарачĕсемпе усă курма юрамасть. Паллă ĕнтĕ, пĕтĕм район шайĕнче çакна тăруках пурнăçа кĕртме май çук. Апла пулин те уйрăм хуçалăхсенче ку енĕпе çине тăрса ĕçлеме тытăнма май пур.

Ял хуçалăхне тăнăç аталантарас тĕлĕшпе палăртнă ытти ыйтусем пирки те чарăнса тăма пулать. Пĕтĕмпех вĕсем пирĕн пурнăç условийĕсене малашне лайăхлатса пырассипе çыхăннă. Апла пулсан мĕн палăртнине ăнăçлă пурнăçа кĕртессинчен никам та айккинче тăрса юлма пултараймасть. Çавăн чухне кăна пулĕ ăнăçу.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта

# Кашнин ыйтăвне тивĕçтерме тăрăшатпăр

***«Çапла, кризис условийĕсенче халăха ĕçпе тивĕçтермелли программа валли эпир тата 668 миллион та 700 пин тенкĕ хушма укçа уйăртăмăр. Унпа 39 пин çынна вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарнă. 1 пин те 170 ĕçсĕр çынна хăйсен бизнесне йĕркелеме укçа-тенкĕ панă. Çапах та 5 пин те 300 çын хăйсене професси енĕпе маларах вĕрентессипе килĕшни пĕлтерĕшлĕрех. Министрсен Кабинетне, халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăсене, ĕç паракансене çакна шута илме ыйтатăп: ĕçлекеншĕн те, республикăшăн та XX ĕмĕрти малашлăхсăр ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварассишĕн пысăк укçа-тенкĕ тăкаклама кирлĕ мар, ун вырăнне укçа-тенке çынсене çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлеме, малашлăхлăрах, XXI ĕмĕрти производствăсене кирлĕрех çĕнĕ профессисене алла илме яни тĕрĕсрех. Психологи тĕлĕшĕнчен нумайăшĕшĕн çакна тума йывăр. Анчах гарантиленĕ ĕç вырăнĕ пултăр тесен çакна тумаллах».***

**(Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров республика Патшалăх Канашне янă Çыруран).**

Çынсене ĕçпе тивĕçтерессипе, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелессипе республикăн тĕллевлĕ программине тата ведомство тĕллевлĕ программине тĕпе хурса ĕçлетпĕр. Çак вăхăта официаллă майпа ĕçсĕррисем тесе районĕпе 152 çынна регистрацилесе учета тăратнă. Ку вăл ĕçлеме пултаракансен йышĕн 0,69 процентĕ пулать.

Çынсене ĕçе вырнаçтарассипе кăçал япăх мар ĕçлерĕмĕр. Заданипе пăхнă пек çулталăк хушшинче 750 çынна ĕçе вырнаçтармаллаччĕ пулсан, 1195 çынна ĕç тупса пама пултартăмăр. Вăл шутран 14–18 çулсенчи çамрăксене – 652. Çав тĕллевпе 327 пин те 400 тенкĕпе усă курнă. Çулталăк пуçланнăранпа вара хамăр патра 1542 çынна учета тăратрăмăр.

Ĕçсĕр юлнисенчен чылайăшне обществăлла ĕçсене явăçтарма май килчĕ. Ку енĕпе çулталăк планне пурнăçларăмăр ĕнтĕ. Обществăлла ĕçсене явăçтарнисем 111 çын пулчĕ.

Планпа пирĕн çынсене çĕнĕ профессисене 60 çынна вĕрентмелле пулнă. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă 65 çын ĕç рынокĕнче паян кирлĕ профессисене илме пултарчĕ. Ку тĕллевпе 424 пин тенкĕпе усă курнă. Кунпа пĕрлех вĕсене вĕренме çӳреме çул укçи 62 пин те 500 тенкĕ тӳленĕ. Планпа пăхнă пекех, уйрăмах хӳтлĕхсĕр юлнисене 3 çынна вĕренме майсем туса панă.

Заданипе пăхнă пекех, професси ориентацийĕ енĕпе занятисене йĕркеллĕ ирттернĕ. 15 çын тĕрлĕрен клубсене çӳренĕ. Ĕçсĕррисем валли вакансисем 65 пулнă.

Ĕçсĕррисене пособи тӳлесе тăнипе, вăхăтлăх обществăлла ĕçсене явăçтарнипе пĕрлех вĕсене яланлăх ĕç вырăнĕ тупса пани, хăйсен харпăр хăй производствине йĕркелеме майсем туса пани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май республикăн тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн кăçал районти ĕçсĕррисем валли 2 миллион та 58 пин тенкĕ уйăрса панă. Уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă куртăмăр. Хăйсен производствине йĕркелес шутлисенчен районти ĕçпе тивĕçтерекен центра бизнес-плансем тăратакансем 35 çын пулчĕ. Вĕсене ĕç ушкăнĕсен ларăвĕсенче сӳтсе явса хак патăмăр, ыйтăвĕсене тивĕçтертĕмĕр. Уйрăммăн илес пулсан, хурт-хăмăр ĕрчетме, тĕрлĕрен ял хуçалăх культурисене çитĕнтерме, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илме, хресчен-фермер хуçалăхĕсем йĕркелеме тата ытти ĕçсене пуçăнма кăмăл тăвакансем пулчĕç.

Предприятисемпе, организацисемпе, шкулсемпе, ял тăрăхĕсемпе, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе килĕшӳсем туса ĕç вырăнĕсем йĕркелерĕмĕр. Кун пекисем пĕтĕмпе 75 пулчĕ. Вĕсенче пирĕн планпа 1054 ĕç вырăнĕ хатĕрлеме пăхнăччĕ. Эпир вара ĕç вырăнĕсене 1700 йĕркелеме пултартăмăр. Вăл шутран ĕçрен массăллă хăтарма пултарнисем валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем 1239, обществăлла ĕç вырăнĕсем 385, стажировкăна янисем 76. Çав тĕллевпе пĕтĕмпе 17 миллион та 278 пин те 643,6 тенкĕпе усă куртăмăр.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Республика Президенчĕ ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче пирĕн служба умне те пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Вĕсене эпир аван ăнланатпăр. Мĕншĕн тесен эпир епле ĕçленинчен, эпир хамăр умри тивĕçсене мĕнле пурнăçласа пынинчен çынсен пурнăç шайĕ, тĕрĕссипе обществăри тăнăçлăх та нумай килет. Çавна шута илсе тунă ĕçсемпе çеç çырлахса ларма шутламастпăр, малашлăх валли татах сумлăрах задачăсем палăртатпăр.

**Т. АНТОНОВА,**
**районти ĕçпе тивĕçтерекен центр директорĕ.**

Çĕнĕ çул уявĕ умĕн

# Чăрăшсене сыхласа хăварар

Хĕл хăйĕнпе пĕрле пурте кĕтнĕ Çĕнĕ çул уявне илсе килет. Пурте ăна савăнăçлăн паллă тăвасшăн. Чылайăшĕшĕн чĕрĕ чăрăш тупасси тĕп задача пулса тăрать. Паллă ĕнтĕ, пасарсене кайса хăвăра килĕшекен чăрăша суйласа илме йывăр мар.

Тĕрĕссипе Çĕнĕ çул елкине капăрлатас йăла Раççейре 1852 çултанпах пырать. Ун чухне пĕрремĕш елка Петербургра Екатерина вокзал пӳлĕмĕнче хăйĕн çутисене çутнă.

Унтанпа мĕн чухлĕ çамрăк чăрăша тĕп туман-ши. Çулленех çĕршер пин йывăç «пуртă айне» пулать. Юлашки чăрăш юлмиччenex çапла хăтланăпăрши?

**Анчах эсир пĕлетĕр-и?**

1,5–2 метр çӳллĕш чăрăш е хыр ӳстерме сахалтан та 10(!) çул кирлĕ.

Лайăх «ĕçлекен» 1 гектар чăрăш вăрманĕ çулталăкне 30 тонна (!) кислород кăларать.

1 гектар чăрăш вăрманĕ 1 сехет хушшинче 200 çын сывласа кăларакан таса мар сывлăша «çăтса ярать».

**Çак илемлĕх тĕнчине мĕнле сыхласа хăвармалла-ха?**

Мелĕсем çук мар, вĕсем пурте юрăхлă.

Чи малтанах, чăрăшсене сутма ятарлă вăрман хуçалăхĕсенче çитĕнтермелле. Халĕ вара тӳрĕ чунлă сутуçăсем хушшинче хăйсен ирĕкĕпе вăрман касакансем те сахал мар. Пасарсенче çеç мар, çуртсен картишĕсенче те сутă тăваççĕ чăрăшсемпе. Республикăра ку енĕпе çирĕп йĕрке çук.



Иккĕмĕш мел – чĕрĕ тата искусствăлла чăрăшсем вырăнне елка çыххисемпе усă курни. Кусем вĕсем – хитре илемлетнĕ чăрăш тураттисем. Елка çыххисене темиçе те хатĕрлеме пулать. Хĕллехи вăрман, чăрăшăн техĕмлĕ шăрши те пулĕç. Чăрăш та сывă юлĕ.

**13 çул ĕнтĕ** Чăваш Республикинчи çамрăксен экологи дружини Çĕнĕ çул умĕн саккуна пăсса чăрăшсем касассин проблемине татса парассипе тĕллевлĕн ĕçлесе пырать. **«Чăрăш» операци** вăл – тавралăха сыхлассин комплекслă акцийĕ. Унта пурин те активлă хутшăнма тăрăшмалла. Тавралăх илемĕ – хамăршăнах.

«Свобода» хуçалăха йĕркеленĕренпе – 80 çул

# Аталану çулĕ тумхахсăр пулман

Кашмашпа Çатракасси тăрăхĕнчи вак хуçалăхсем пĕрлешсе «Свобода» хуçалăх йĕркелени çак кунсенче 80 çул çитрĕ. Çав ятпа Кашмашри Культура çуртĕнче ирттернĕ савăнăçлă пухура шкул директорĕ хуçалăх историйĕ çинчен каласа пани çителĕксĕр тесе шутлатăп. Çавна май манăн хушса каласа парас шухăш çуралчĕ.

Хуçалăхăн малтанхи историне аван астăватăп. 1929 тата 1930 çулсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа ытти вак хуçалăхсем йышлăн пĕрлешме пуçларĕç. Йĕркеленӳ тапхăрĕнче хуçалăха Илья Копта ертсе пычĕ (паян пурăнакан Копта Петĕрĕн ашшĕ). Сывлăхĕ начар пулнăран И. Коптана Степан Тихонович Тихонов улăштарчĕ.

1930 çулта хуçалăха аркатас шухăшлă çынсем ялти халăх хушшинче хумхану çĕклес тĕллевпе колхоза кĕнĕскерсем каялла тухрĕç. Вĕсене курса ыттисем те колхозран тухма пуçларĕç. Районтан ответлă çынсем килсе халăха пĕр çĕре пухса калаçусем ирттернĕ хыççăн кăна колхоза сыхласа хăварма май килчĕ. 1930–1933 çулсенче колхозниксене тырă нумай валеççе пачĕç.

Степан Тихонов хăйĕн ирĕкĕпе хуçалăх ертӳçинчен тухсан, председатель пулма милиционер пулса ĕçлекенскере шанчĕç. Çакăн хыççăн колхозниксен пурнăçĕ чăтмалла мар йывăрланчĕ. Ĕçленĕшĕн тырă валеçме пăрахрĕç. Хуçалăхăн çĕнĕ пуçлăхĕ хăйне хӳтĕлесе тăма ятарлă ушкăн йĕркелерĕ. Демократи йĕрки пачах пĕтрĕ.

Çĕршыва Н. Хрущев ертсе пынă вăхăтра колхозниксем пурте пĕр шухăшлă пулса халăх юратман хуçалăх ертӳçине ĕçрен хăтарма вăй çитерчĕç.

Малашне вара хуçалăх тилхепине ĕçе юратакан, ял халăхĕ хисеплекен Семен Петрович Ишакова шанса пачĕç колхозниксем. С. Ишаков председательте ĕçленĕ вăхăтра хуçалăхра тискер те хăрушă пулăмсем пулма пуçларĕç. Акă пĕр тĕслĕх: 60 гектар çинче çитĕнтернĕ ыраш, çурлапа вырса илсе капансене хывнăскер, пĕтĕмпех çунса кайрĕ. Тепĕр тĕслĕх: ферма ĕнисене юрса пама тесе ферма çывăхне турттарса хунă паха улăм та нумай çунса кĕлленчĕ.

С. Ишакова хуçалăх ертӳçинче 2 çул кăна ĕçлеттерчĕç район пуçлăхĕсем. Малалла хуçалăха ертсе пыма районти ял хуçалăх управленийĕнче ĕçленĕ Петр Степанович Степанова илсе килчĕç. Вăл ĕçленĕ вăхăтра та хуçалăхра унччен асăннă хăрушă пулăмсем чарăнмарĕç. Акă самăртса çитернĕ, патшалăха ăсатма хатĕрленĕ 100 килограмран кая мар таякан 95 пуç сысна пĕр каçра вилсе выртрĕ. 9500 килограмм аш-какай сая кайрĕ. Тепĕр вăхăтран авăн çапмалли техника кĕтмен çĕртен юрăхсăра тухрĕ. Сысна ферминчи пусăра 200 тонна ытла çĕр улми шăнса кайса çĕрчĕ. Паллах, çаксем вĕсем аça çапнипе пулман ĕнтĕ.

80 çул хушшинче 16 çын хуçалăхра председатель пулса ĕçлесе пăхрĕ. Вăл шутра ытларах ĕçлекенни Кронид Ефимович Сретинский пулчĕ. 26 çул ертсе пычĕ вăл хуçалăха. Тыр-пул ӳстерессипе, аш-пăш, сĕт туса илессипе хуçалăх япăх мар ĕçлесе пынă. В. Мартынов ертсе пынă вăхăтра хуçалăх Мускав умĕнче те чапа тухма пултарчĕ. Хуçалăхра кашни ĕнерен çулталăк хушшинче вăтамран 6000 килограма яхăн сĕт сăвакан доярккăсем те пулнă.

Çакăн пек тĕслĕхсем те пулчĕç хуçалăхра. Акă колхозра ăратлă сыснасем çитĕнтеретчĕç. Хуçалăхăн опычĕпе паллаштарас тĕллевпе 2 сыснана Мускава ял хуçалăх выставкине илсе каяççĕ. Унта амасенчен çурасем илсе ыттисене кăтартмалла пулнă. Сыснасене пăхса тăма хуçалăхран пĕр çынна яраççĕ. Шел, сыснасене пăхаканăн тимсĕрлĕхне пула мĕн палăртни пурнăçланмасть. Тĕрĕссипе каласан, çуралнă çурасем амăшĕ айне пулса пĕр каçра пурте вилсе выртаççĕ.

Çакна та эпĕ лайăх астăватăп. К.Е. Сретинский хуçалăха ертсе пынă малтанхи çулсенче хуçалăхăн укçа кассипе тырă склачĕсем пуян пулчĕç. Эпĕ вăл вăхăтра трактор бригадине ертсе пынă. Паллах, çапла тума çăмăлах пулман. Çур аки ĕçĕсене пахалăхлă тата вăхăтра ирттернĕ, техникăна юсаса хатĕрлесси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Уй-хирте пуян тыр-пул хумханса ларнă. Пулса çитнĕ тыр-пула вăхăтра, тăкаксăр пухса илес тĕллевпе техникăна юсаса регулировка тăвасси пирки манман. Вырма ĕçĕсем вĕçленсен ку уйсенче сипсимĕс калча «ешермен».

Вăл вăхăтра ампар виçипе гектар пуçне вăтамран 34 центнертан кая мар тыр-пул пухса кĕртеттĕмĕр. Хуçалăхра тырă вырнаçтарма вырăн çитместчĕ. Çапла вара колхозниксене ĕçленĕшĕн кашни пĕр тенкĕ пуçне пĕршер килограмм тырă тӳлевсĕр валеççе пама майсем пулнă. Хуçалăхра чуна парса ĕçлекен колхозниксем 6–7 тоннăран кая мар тырă илме пултарнă. Ăна паян та çынсем астăваççĕ. Кун пекки хуçалăх йĕркеленнĕренпе те пулман.

Шкул директорĕ юбилей пухăвĕнче лайăххи пирки кăна ытларах асăнчĕ. Шел пулин те, 80 çул хушшинче хуçалăх историйĕнче салхуллă самантсем те сахал мар пулнă. Пурнăç çулĕ тумхахлă çав.

**В. ИВАНОВ,**
**вăрçăпа ĕç ветеранĕ.**
Кашмаш ялĕ.

Сăвă йĕркисем

## ЮРАТУШĂН...

Юратупа ман чĕре хĕмленнĕ,
Ăшăмри çунатăм вĕлкĕшет вĕр-вĕрлĕн.
Ах, çак юратушăн çут тĕнчене эп килнĕ!
Юратушăнах сив çĕр ăшне те кĕрĕп...

**В. КОНСТАНТИНОВ.**